25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 4 ЭРНЕКУН 206 (6141) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем çителĕклĕ хатĕрлесе парар

Иртнĕ хĕлре пирĕн совет çыннисем ăшă тумтирсем сахал мар пухса парĕç, тирсемпе çăмран туса хатĕрленĕ кĕрĕк пиншаксемпе, çăматăсемпе, алшиш-чăлхасемпе Хĕрлĕ Çар боецĕсене тумлантарма пулăшрĕç. Совет халăхĕ тăрăшнипе пула пирĕн боецсемпе командирсем ăшă тумтирсем çителĕклĕ илчĕç, ăшă тумланчĕç. Вĕсем шартлама сивĕсенче те çапăçу хирĕсенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешрĕç.

Совет воинĕсене кăçал та ăшă тумлантарас пулать. Ку тĕлĕшпе совет çыннисем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе малалла туса пыраççĕ. Пир-авăр, тир-сăран промышленноçĕсен предприятийĕсем çар валли тумтирсем туса парас тĕлĕшпе кунĕнçĕрĕн ĕçлеççĕ, чылай предприятисем плансене ирттерсе тултарса Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăна тухрĕç. Пур предприятисем те малта пыракан предприятисем пек ĕçлесен, пирĕн çар кăçал тата нумайрах тумтир илме пултарать.

Çав вăхăтрах пирĕн совет халăхĕ Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме тир, çăм тата ытти чĕртаварсене, хатĕр тумтирсемпе япаласене пухать. Пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисем те Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем чылай хатĕрлесе пачĕç. Ăшă тумтирсем пухакан вырăнти комиссисем тимлесе ĕçленĕ çĕрте ку ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Сăмахран, Канаш районĕнче августăн 1—15-мĕшсенче 30 мăшăр çăматă, 70 мулаххай, 15 ваткăллă пиншак, 200 тир, 30 килограмм çăм тата ытти япаласем те пухăннă. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра çак кунсенче 40 тир, 5 килограмм çăм, 5 мăшăр носки пухса районри склада леçсе панă.

Анчах ăшă тумтирсем пухас ĕç çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха. Чылай районсенче çак ĕç начар тăрать. Красноармейски районра август уйăхĕнче пĕтĕмпе те 2 мăшăр çăматă, 67 тир, 48 килограмм çăм, 3 мăшăр алшиш, 28 мулаххай, ваткăллă пĕр шалавар тата ытти вак япаласене кăна пухнă. Етĕрне районĕнчи Чурпайри тата Урапакассинчи колхозсенче ăшă тумтирсем пухакан вырăнти комиссисем нимĕн те ĕçлемеççĕ. Шупашкар районĕнчи Шăнкас ялсоветĕнчи виçĕ колхозран пĕринче те кăçал пĕр япала та пухман. Улатăр, Вăрнар, Первомайски, Йĕпреç, Комсомольски, Куславкка, Шăмăршă районĕсенче те ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатма тăрăшни палăрмасть-ха.

Ку ĕç çителĕксĕр пулса пыни вăл партин хăшпĕр районсенчи организацийĕсем халĕ те уйрăм ĕçсене черетлĕн туса пынинчен килет. Ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен уйрăм комиссисен председателĕсем: халĕ уборка пырать, ăна хăвăртрах туса пĕтермелле, ăшă тумтирсем пухма вăхăт çук, ăна каярахпа та тăвăпăр-ха, текен шухăшпа лăпланса лараççĕ. Ку вара хальхи вăхăтра ниме юрăхсăр шухăш. Çак шухăша пăрахăçламалла та ăшă тумтирсем пухас ĕçе тимлĕн туса пымалла.

Уборкăна ирттернĕ май колхозсенче агитациллĕ ĕç вăйланчĕ. Агитаторсем уборкăра хăйсем примерлă ĕçлесе колхозниксемпе колхозницăсене хавхалантарса пычĕç. Ăшă тумтирсем пухас ĕçре те уборкăри агитациллĕ ĕçĕн опычĕпе усă курас пулать. Кашни агитаторăн, кашни активистăн ăшă тумтирсем парас ĕçре ытти ĕççыннисене пример кăтартмалла. Çакăнтан вара ку ĕç ăнăçлăн пулса пырасси килет.

Пухнă тирсене тата çăмсене çийĕнчех ăшă тумтирсем çĕлетсе хатĕрлеме, çăматăсем йăвалаттарма артельсене памалла пулсан, хăшпĕр районсенчи комиссисем çак ĕçе те вăхăтра туса пымаççĕ. Нумай районсенчи комиссисен склачĕсенче туман тирсем тата çăм чылай пухăннă. Анчах çав чĕртаварсенчен вырăнти промышленность предприятийĕсенче тата промысла артелĕсенче тумтирсем хатĕрлес ĕçе чылай çĕрте организацилемен-ха. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Шăнкасри промысла артелĕ иртнĕ çулта çывăхри колхозсенче пухнă тирсене туса хатĕрленĕ пулсан, кăçал унта тир тума тытăнман, тир тумалли материалсем çук. Кун пек çитменлĕхсем ытти районсенчи предприятисемпе промысла артелĕсенче те пулма пултараççĕ. Çавăнпа та ЧАССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн, Промсоюзăн, Коопинсоюзăн хăйсен предприятийĕсемпе артелĕсенче ăшă тумтирсем хатĕрлеме мĕн çитменнине палăртса, çав материалсемпе хатĕрсене тупма пулăшмалла; çав предприятисемпе артельсенче ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе халех организацилемелле.

Предприятисенчен, учрежденисенчен тата колхозсенчен леçсе панă япаласене районри комиссисен тĕрĕс шута илсе пымалла. Çийĕнчех квитанци çырса памалла, ăçтан мĕнле япала пырса панине счет çине çырса хумалла. Çавăнпа пĕрлех ăшă тумтирсем пухас ĕç мĕнле пулса пынине парти райкомĕсен ялана тĕрĕслесе тăрас пулать.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлесси тата халăхран пухасси—государствăн пысăк ĕçĕ. Çак ĕçе совет гражданĕсен пурин те хутшăнмалла, Хĕрлĕ Çар валли кĕрĕк пиншаксем, çăматăсем, мулаххайсем, тирсем, çăм, ăшă кĕпе-йĕм, ăшă чăлхасемпе алшишсем парас пулать. Совет хĕрарăмĕсен пирĕн боецсемпе командирсем валли ăшă япаласем пухас ĕçе хутшăнса, тăван çĕршывăн телейĕшĕн геройла çапăçакансене — упăшкисене, ывăлĕсене, шăлнĕсене ăшă тумлантарма пулăшмалла. Килхуçи хĕрарăмĕсен пирĕн совет воинĕсем валли килте чăлхасем, носкисем çыхмалла, ăшă тумтирсем çĕлемелле. Ăшă тумтирсем пухас ĕçре комсомолецсем, пионерсемпе школьниксем те пысăк ĕç тума пултараççĕ, вĕсене те çак ĕçе анлăн хутшăнтармалла.

Совет воинĕсене ăшă тумлантарар! Ăшă тата лайăх тумлантарнă боец тăшмана хирĕç тата вăйлăрах çапăçса çĕнтерӳ тăвас, тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкас вăхăта çывхартĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ыйтупа агитациллĕ ĕçе вăйлатмалла

КАНАШ. (Телефонпа). Август уйăхĕнче пирĕн районри ĕççыннисенчен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 30 мăшăр çăматă, 70 мулаххай, 5 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 15 ваткăллă пиншак, 30 килограмм çăм, 200 тир пухăнчĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра (комисси председателĕ Кузьмин юлташ) лайăх туса пыраççĕ. Унтан çак кунсенче 40 тир, 5 килограмм çăм, 5 мăшăр алшиш, 5 мăшăр носки пухса районри склада леçсе пачĕç. Çавăн пекех Сиккассинчи колхозра та ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Унта 30 тир, 10 килограмм çăм тата ытти япаласене те пухнă. Ачакассинчи «Хĕрлĕ Çар» колхозра 35 килограмм çăм пухнă.

Анчах районри хăшпĕр колхозсенче ăшă тумтирсем пухма халиччен те тытăнман-ха. Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ Çăлтăр», Вырăскас Пикшикри «Мотор» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче ăшă тумтирсем пухассипе ĕçлемеççĕ. Çав колхозсенче ку енĕпе ĕçлекен комиссисен председателĕсем Викторов, Савельев тата Семенов юлташсем ăшă тумтир пухас ĕçе организацилеме тăрăшмаççĕ.

Хĕл çывхарать. Ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе хăвăртрах тăвас пулать. Çак ĕç ăнăçлăн пулса пытăр тесен, ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссисен, коммунистсемпе комсомолецсен тата агитаторсен ăшă тумтир пухас енĕпе массăсем хушшинче агитациллĕ ĕçе вăйлатмалла, çине тăрса ĕçлемелле.

Л. ЗНАМЕНСКАЯ.
ВКП(б) Канаш райкомĕн секретарĕ.

Совет Союзне Иран посолĕ г. Меджид Ахи килнĕ

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче Куйбышев хулине Иранăн Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ г. Меджид Ахи килнĕ.

Аэродром çинче Ахи господина Ют-çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, çавăн пекех тата Иран Посольствин составĕ—Ĕçсен Поверенăйĕпе А. Эттесами господинпа пĕрле кĕтсе илнĕ.

Сентябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем нимĕçсен Варшава хулинчи çар об'екчĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Сентябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ нимĕçсен Варшава хулинчи çарпа промышленность объекчĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнипе пула пулара, уйрăмăнах Главнăй штабăн тата çар госпиталĕн районĕнче нумай пушарсем тухнă, вĕсенчен 24-мĕшĕ пысăк пушарсем пулнă, пушарсем вăхăтĕнче вăйлă взрыв пулнă. Кунсăр пуçне, Главнăй вокзалăн, Хĕвелтухăçĕпе Виленски вокзалсен чугунçул линийĕсем çинче 30 пушар тухнă, пушарсем вăхăтĕнче 10 взрыв пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Тырпулсене пухса кĕртес тата кĕртыррисене акас ĕçсене хăвăрт вĕçлесе, хамăрăн мухтавлă боецсене фронтра çĕнтерӳ тума пулăшар!

Канашри „Заготзерно" пунктĕнче йĕркелĕх çук

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Государствăна обязательство шучĕпе тата Хĕрлĕ Çар фончĕ валли тырă пама пынă лавсем хатĕрлев пункчĕ умне çитсе-çитсе чарăнаççĕ. Колхозниксем, лашисене чарса, васкавлăн тырă пахалăхне тĕрĕслеттерме черете тăраççĕ. Вĕсем кашнинех тырра хăвăртрах йышăнтарса хăйсен колхозне таврăнасшăн. Мĕншĕн тесен халĕ, ялхуçалăхĕнче темиçе ĕçе пĕр вăхăтрах туса пынă чухне, колхозшăн кашни çын, кашни лаша хаклине тата вĕсем кăштах ĕçлемесĕр тăни те çав ĕçсене кая хăварнине колхозниксем лайăх ăнланаççĕ.

Анчах Канашри «Заготзерно» пункчĕ тырă йышăнас ĕçе хăвăрт туса пымасть-ха.

Шăхасан районĕнчи «Борец» колхоз членĕсен А. Яковлев, С. Константинов тата Ф. Марков юлташсен лавĕсем хатĕрлев пункчĕ умне çитнĕ вăхăт тĕлне унта вуншар колхозник тырă пахалăхне тĕрĕслеттерме черет кĕтсе тăнă. «Борец» колхоз членĕсем те вĕсем хыççăн черете тăчĕç. Икĕ сехет кĕтсен черет çитрĕ.

Тырă йышăнас ĕçре çавнашкал чăрмавсем пулни чи малтанах Канашри «Заготзерно» пункчĕ (директорĕ Буткевич) ку ĕçе туса ирттерме начар хатĕрленнине кăтартса парать.

«Заготзерно» пункчĕн 5 лаборант, 4 визировщик пулмалла. Унта халĕ 2 визировщик, пĕр лаборант çитмест. Кунсăр пуçне лабораторире ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ ку ĕçе пуçламĕш çул хутшăннă. Вĕсене кирлĕ пек вĕрентсе хатĕрлемен. Çавăнпа лаборатори куллен ĕçлет.

Хатĕрлев пункчĕ ирхине 8 сехетре пуçласа 9 сехетчен çеç ĕçлет. Çавна пула каçа хирĕç тырă пама пыракансен тыррине йышăнассине час-часах тепĕр куна хăвараççĕ. «Заготзерно» пункчĕн главнăй бухгалтерĕ каланă тăрăх, кăшпĕр чухне çавăн пек çĕр выртакансен хисепĕ 300—350 çынна та çитет.

Тырра талăкра 12—13 сехет кушшин çеç йышăннине тата çав вăхăтра та ку ĕçре пысăк чăрмавсем пулнине шута илсен, «Заготзерно» пункчĕн руководителĕсен сӳрĕклĕхне, вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме пĕлменни колхозсемпе государствăна мĕн чухлĕ сиен кӳнине уççăн курма пулать.

Канашри «Заготзерно» пункчĕн ĕçне халех йĕркелемелле. Тырă йышăннă çĕре опытлă лаборантсене, весовщиксене лартмалла, тырă йышăнас ĕçе талăкĕпех пĕр чарăнусăр туса пымалла. Çапла тунипе çеç тырă пама пыракансем вăхăта усăсăр ирттересрине май килнĕ таранах чакарма пулать.

Тата çакăн çинчен те пĕр-ик сăмах каласа хăвармалла: кунта тырă пама пыракансем хушшинче культмассăллă ĕçе туса пымаççĕ. Хĕрлĕ кĕтес валли уйăрнă пӳлĕме хатĕрлев пунктĕнче ĕçлекенсен хваттерĕ тунă.

Чăваш АССР Наркомземĕн Политикăллă секторĕ тăратнă тăрăх, машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн тата тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне срокчен пурнăçланăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Елчĕк МТС тăрăх

30. 13-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Аверкий Веков). Çулталăк планне 126 процент тултарнă.

31. 11-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Алексей Макинин). Çулталăк планне вăл 115 процент тултарнă.

32. 8-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Павел Маков). Çулталăк планне 107 процент тултарнă.

33. 10-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Георгий Струнков). Çулталăк планне 101 процент тултарнă.

34. 5-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Иван Темяшкин) Çулталăк планне 100 процент тултарнă.

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕпе Чăваш АССР Наркомземĕн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

35. Ишлей МТС-ĕ (директорĕ — Васильев, политотдел начальникĕ—Степанов, старши механикĕ—Кириллов, старши агрономĕ—Рязанов). Вăл тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана, авăн çапассисĕр пуçне, августăн 27-мĕш тĕлне 101 процент тултарнă, çав шутра: комбайнпа выраccине—101 процент, кĕрхи тырăсене акассине—125 процент тултарнă, 13.200 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

36. Елчĕк МТС-ĕ (директорĕ—Яшин, политотдел начальникĕ—Михеев, старши механикĕ—Павлов). Вăл тракторпа ĕçлемелли çулталăкри ĕçсене, авăн çапассисĕр пуçне, августăн 29-мĕш тĕлне 100 процент тултарнă тата 7.385 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварнă.

МТС-сен политотделĕсем тăратнă тăрăх, тракторсемпе тата комбайнсемпе ĕçлесе пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

37. Шăхасан МТС-ĕн 7-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ—Поликарп Морозов). Вăл хăйĕн тракторĕсемпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 1.065 гектар вырăнне 1.464 гектар ĕçленĕ тата 1.532 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

38. Шăхасан МТС-ĕн 10-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ—Константин Петров). Вăл хăйĕн тракторĕсемпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 1,065 гектар вырăнне 1.447 гектар ĕçленĕ тата 2.459 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĂÇАЛХИ СЕНТЯБРЕН 1-МĔШ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ ТАТА КĔРТЫРРИСЕМ АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнă (процентпа)	Кĕрхи тырăсем акнă (процентпа)
Улатăр	92,9	51,1
Элĕк	99,9	83,1
Вăрнар	100,0	75,5
Йĕпреç	97,9	69,7
Ишлей	96,1	92,9
Калинински	100,0	79,4
Канаш	98,2	100,9
Куславкка	80,5	82,4
Комсомольски	97,9	78,2
Красноармейски	95,1	94,3
Хĕрлĕ Чутай	96,2	96,8
Кувакино	74,1	70,1
Сĕнтĕрвăрри	95,5	83,9
Октябрьски	94,8	80,1
Первомайски	79,6	76,3
Пăрачкав	83,9	65,6
Советски	97,6	89,5
Сĕнтĕр	97,7	90,2
Вăрмар	95,1	91,5
Çĕрпӳ	98,9	85,8
Шупашкар	97,2	99,8
Чкаловски	87,5	66,2
Шăмăршă	89,3	65,8
Шăхасан	96,7	92,8
Çĕмĕрле	96,1	80,8
Етĕрне	98,1	84,4
Елчĕк	87,5	86,2
Тăвай	93,6	78,5
Шупашкар хули	93,8	100,3
ЧАССР тăрăх	93,6	82,8
Августăн 25-мĕш тĕлне пулнă	82,4	59,7

Вунăкунлăха пур колхозсем те хутшăнчĕç

СĔНТĔР, сентябрĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлес тĕлĕшпе тăван çĕршывра пуçланнă фронтовой вунăкунлăха районри пур колхозсем те хутшăнчĕç. Ĕнерхи кун тĕлне район тырпулсен 95 процентне вырса пуçтарнă. Вырма ĕлкĕреймен 1.000 гектара яхăн тырăран пурте тенĕ пекех пăрçа-ясмăк культурисем. Халĕ хĕрсех пăрçа-ясмăк çулатпăр, вĕсене сулнă хыççăн тӳрех çапнă çĕре турттаратпăр, нӳрелме памасăр çапсах тăратпăр.

Районра кĕлтесене капана хывасси тата авăн çапасси юлса пырать. Вырса пухнă 18.904 гектартан 6.812 гектар çинчи кĕлтесене çеç капана хывнă, 4.860 гектар çинчи тырра çапнă.

Фронтовой вунăкунлăха организованно хутшăннă Чапаев ячĕпе тăракан, «Новая Юнга» колхозсем çак кунсенчех авăн çапас ĕçсене вĕçлеççĕ. «Новая Юнга» колхоз пăрçа çапса пĕтернĕ. Унта пăрçа çапма ятарласа молотилка тунă. Çав молотилкăн барабанне тата ытти хăшпĕр пайĕсене йывăçран тунă. Молотилка пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Ку колхозра лаша вăйĕпе 4 молотилка ĕçлет. Вĕсемпе колхоз кашни кун вăтам шутпа 5—6 тонна тырă çапса кĕртет.

Кая юлса пыракан колхозсене вунăкунлăх вăхăтĕнче пур майсемпе те пулăшатпăр. Ĕнер «Прожектор» колхоза тырă вырас ĕçе хăвăртрах вĕçлеме пĕр комбайн ятăмăр. «Восток» колхозри комбайна авăн çапас ĕçе яма хушрăмăр. Районĕпе авăн çапнă çĕрте колхозсен молотилкисемсĕр пуçне МТС-ăн 17 сложнăй молотилки, 3 комбайнĕ ĕçлет.

Фронтовой вунăкунлăха хутшăнса, эпир кĕлтесене капана хывассине сентябрĕн 12-мĕшчен, авăн çапассине октябрĕн 15-мĕшчен туса çитерессишĕн кĕрешĕве тухрăмăр.

Г. ГУСЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Уборка ĕçĕсене вĕçлессишĕн

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха пирĕн районри колхозсем пурте хутшăнчĕç.

Сентябрĕн 1-мĕш тĕлне район 16.523 гектар çинчи тырăсене вырса пухса, плана 97,6 процент пурнăçларĕ. Районри 87 колхозран 54-шĕ тырă вырас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç. Фронтовой вунăкунлăха хутшăнса, эпир тырă вырас, кĕрхи тырăсене акас ĕçсене сентябрĕн 5-мĕшĕнче йăлтах вĕçлессишĕн кĕрешӳ пуçартăмăр. Çак вунăкунлăхра пирĕн 1.148 гектар çинчи тырпула вырса пĕтермелле, кĕлте кӳрес тата авăн çапас ĕçсем кая юлса пырассине пĕтермелле. Районри колхозсем сентябрĕн 1-мĕш тĕлне 4.658 гектар çинчи кĕлтесене кăна кӳрсе капана хывнă-ха, 3.139 гектар тыррине çеç çапса пуçтарнă. Вунăкунлăхра çак ĕçсене уйрăмах вăйлатмалла.

Кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем юлса пыни çакăнтан килет: районри колхозсем пĕри те кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывма тытăнман-ха, ку ĕçре вăкăрсемпе, хĕсĕр е сĕт сахал паракан ĕнесемпе пачах усă курмаççĕ.

Районри хăшпĕр колхозсенче тырпул тăкаланнине хирĕç кĕрешес ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра, сăмахран, тăпачăпа çапнă кĕлтесене тепĕр хут çапса пăхсан, çапнă кĕлтесенчи кашни килограмм пучахран 96 грамм тырă тухнă. Çав кĕлтесене халĕ тепĕр хут çапма хушрăмăр. «Ядро», «Добролет» колхозсенче пучахсем пухассине пачах организацилемен. «Ядро» колхозра вырса пухнă кашни тăваткăл метр çинче 8—9 пучах выртса юлнă. Апла пулин те колхоз, ĕç вăйĕ тивĕçмест тесе, пучахсем пухассине организацилемен.

Фронтовой вунăкунлăхра тырпул тăкаланнине хирĕç кĕрешес ĕçе те тĕпрен вăйлатрăмăр. Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртлатма районри учреждениесенче ĕçлекенсене татах 150 çынна колхозсене ĕçлеме ятăмăр.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комсомол организацийĕн уборкăри ĕçĕсем

ШĂМĂРШĂ. Комсомолăн «Победа» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ тырпулсене пухса кĕртме комсомолецсене, союзра тăман çамрăксене тата ытти ĕççыннисене мобилизацилес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлерĕ. Çавна пула колхоз виçĕ кун çурăра ыраш вырса пĕтерчĕ.

Машиновед комсомолец П. Терентьев кашни кунах нормăна ирттерсе тултарса пычĕ. Çавнашкалах вăл государствăна тырă парас ĕçе организацилерĕ. Чеменовпа Алексеев комсомолецсен бригадисем виçĕ кун хушшинчех ыраш вырса пухрĕç. Е. Терентьевпа Е. Рахманова юлташсем те уборкăра тăрăшса ĕçлерĕç.

Авăн çапнă çĕрте те комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем нормăсене ирттерсе тултарса пыраççĕ.

П. КУЗЬМИН.
М. ВАСАН.

Предприятисемпе учреждениесен работникĕсем—ялхуçалăх ĕçĕсенче

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа). Августăн 30-мĕшĕнче ,канмалли кун, район центрĕнче пурăнакансем, предприятисемпе учреждениесенче ĕçлекенсем районри колхозсене тырпулсене пухса кĕртме пулăшас шутпа массăллă воскресник тухрĕç. Малтан палăртнă тăрăх, воскресник районĕпе пурĕ 1.000 çынна яхăн хутшăннă. Комбинатра ĕçлекенсем кăна 600 çын ытла «Большевик», «Самолет», «Ударник» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсен хирĕсенче ĕçленĕ. Вĕсем пурĕ 100 гектар çинчи кĕлтесене алă вĕççĕн çĕклесе капана хывнă, вуншар гектар сĕлĕ, тулă вырнă, йĕтĕн татнă.

«Большевик» колхозра Анисимов юлташ ертсе пыракан 203 çынран тăракан ĕç отрячĕ 52 гектар çинчи кĕлтене алă вĕççĕн çĕклесе капана хывнă, 1,2 гектар çинчи йĕтĕне çапнă.

Отряда 4 бригадăна уйăрнă. Бригадăсем пĕр-пĕрин хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлерĕç. Ăмăртура техник Гусев, смена мастерĕ Байняшев юлташсен бригадисем мала тухрĕç. Рабочисенчен уйрăмăнах инструментальщик Петров, сборщиксем Николаев, Губанихина, Серебрякова, станочник Кузьмин юлташсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем ĕç нормине ытлашшипех тултарчĕç.

Çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсем те воскресник кунĕнче 8 гектар çинчи кĕлтесене капана хыврĕç.

Х. ЛИСИН.

* * *

КАНАШ. Колхозник çуртĕнче ĕçлекенсем ĕç хыççăн кашни кунах «Мотор» колхозăн хирне тырă вырма тухаççĕ. Вĕсем уборка пуçланнăранпа 4 гектар çинчи тырăсене вырнă. Ку ĕçре уйрăмăнах К. Егорова, А. Васильева, М. Морко, Н. Кулагина, А. Капитова юлташсем палăрчĕç. Вĕсем халĕ çав колхозрах çĕрулми кăларнă çĕрте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулти йăнăшсене тумастпăр

ВĂРНАР. Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхоз иртнĕ çул махоркăна пухса кĕртнĕ чухне агротехникăллă правилăсене пăснă. Çавна пула кашни гектартан вăтам шутпа 5—6-шар центнер махорка сахалтарах туса илнĕ.

— Эпир иртнĕ çул махоркăна мĕнле май килнĕ, çапла касса илнĕ. Ку ĕçе агротехника правилисене пăхăнмасăр тунă, кăçал вăл йăнăша урăх тумастпăр,—тет махорка туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăн бригадирĕ А. Коннова юлташ.

Коннова юлташ бригади кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 20 центнертан кая мар махорка туса илме обязательство илнĕ. Халĕ махоркăн пĕр пайне агротехника вĕрентнĕ майсемпе касса типĕтнĕ ĕнтĕ. Шутласа пăхнă хыççăн, бригада гектартан вăтам шутпа 21-шер центнер махорка туса илнине палăртнă.

Махоркăн типсе çитнĕ малтанхи ушкăнне колхоз çак кунсенчех 1942 çулти обязательствăсен шучĕпе хатĕрлев пункчĕсене леçсе парать.

Т. СЕЛЕЗНЕВА.

ХИСЕП ХĂМИН ВĂЙĔ

ЕЛЧĔК. «Путь Ленина» колхозра тырпулсене пухса кĕртес ĕçри стахановецсемпе стахановкăсен ячĕсене хисеп хăми çине çырса пыраççĕ.

Хисеп хăми çине пĕрремĕш бригадăран тырă вырнă çĕрте 525 кĕлте тăвакан Агапия Семеновна Векова, 555 кĕлтерен кая мар выракан Анастасия Кириллова, 520 кĕлте тăвакан Елена Иванова, 515 кĕлте вырса çыхакан Анастасия Алексеевна Чернова, 485-шер кĕлте выракан Агапия Григорьевна Лисицинăпа Александра Медведева, 465 кĕлте выракан Клавдия Медведева юлташсене кĕртнĕ.

Тăваттăмĕш бригадăран хисеп хăми çине тырă вырнă çĕрте 585 кĕлте тăвакан Раиса Векова, 520 кĕлте выракан Мария Лазаревна Пушкина юлташсене кĕртнĕ. Кунтах тата ачипе яслĕке хăварса уйхирте ĕçлекен Екатерина Козлова кунне 515 кĕлте тупи çинчен çырнă.

Хисеп хăми колхоз правленийĕн канцелярийĕ патĕнче çакăнса тăрать. Ун çине мĕн çырнине колхозниксемпе колхозницăсем кашни кунах вулаççĕ, вĕсем те колхозри стахановкăсем пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленĕ май, «Путь Ленина» колхоз план тăрăх кĕрхи тырăсене 12 кун хушшинче вырса пĕтерес вырăнне 10 кунра вырса пĕтерчĕ. Халĕ колхозра хĕрсе авăн çапаççĕ, колхозăн тăватă бригади те пусасене татса пĕтернĕ, государствăна тырă параççĕ.

Колхозра стена хаçачĕсем те тухса тăраççĕ.

И. СКОВЕЛЕВ.

Совет Информаци Бюровěнчен

Сентябрěн 2-мěшěнчи каҫхи пěлтерӳ

Сентябрěн 2-мěшěнче пирěн войскăсем Сталинград хули патěнче, Сталинградран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре, Сталинградран кăнтăр-хěвеланăҫнерехре тата Новороссийскран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре районěсенче хаяррăн ҫапăҫнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Сентябрěн 1-мěшěнче пирěн авиаци чаҫěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěҫсен 20 ытла танкне бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ҫити пěтерсе тăкнă е сиенленě, полевой тата зенитлă артиллерин 12 батарейне пусарса лартнă, боеприпассем пěр складне тата горючи усракан 2 склада сирпěнтерсе янă, чугунҫул ҫинчи 3 эшелона аркатса тăкнă, противникăн пехотине пěр батальона ҫити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре пирěн чаҫсем нимěҫсен фашистла войскисене ҫапăҫусенче пыра-пыра ҫапнă. Пирěн Н-ски часть хěҫ-тăшманăн 8 танкне, боеприпассем тиенě 12 автомашинине, 7 противотанковăй орудине пěтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пěр ротăна ҫити вěлерсе пěтернě. Ытти участоксенче пирěн войскăсем противникăн атакисене сире-сире пынă.

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăҫнерехре пирěн войскăсем противникăн пирěн оборонăна тата кěнě танксемпе пехотин пысăк вăйěсене хирěҫ хěрӳллěн ҫапăҫнă. Пěр участокра нимěҫсем атакăна 150 танка ҫити кěртсе янă. Ҫав рубежа хӳтěлекен пирěн чаҫсем артиллеристсен пулăшнипе противникăн 30 танкне ҫити ҫěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Анчах та нимěҫ танкěсен пěр пайě пирěн позицисене шала кěме пултарнă. Вăйлă ҫапăҫусем хыҫҫăн пирěн чаҫсем ҫав участокра оборонăн ҫěнě рубежне патне чакнă.

Краснодартан кăнтăртарахра сăртсем хушшинче тухмалли вырăнта пирěн чаҫсем тăшманăн группировкине хупăрласа илнě те ăна пěтěмпěшех пěтерсе тăкас тесе ҫапăҫаҫҫě. Краснодартан хěвеланăҫнерехре пирěн войскăсем Новороссийск енелле наступлени тăвакан противника хирěҫ оборона тытаҫҫě. Вăйлă ҫапăҫусем туса пынă. Халăх пурăнакан пěр пунктшăн пынă ҫапăҫура пирěн боецсем нимěҫсен пěр танкне, 2 бронемашинине, 13 автомашинине пěтерсе тăкнă тата салтакпа офицерсене 200 ҫынна ытла вěлерсе пěтернě.

Моздок районěнче пирěн чаҫсем противникăн атакисене сире-сире пынă. Совет артиллерийě нимěҫсен 3 бронемашинине, 8 автомашинине пěтерсе тăкнă. Шыв урлă хывнă каҫăсем ҫинче тăшманăн 3 катерне тата 8 понтонне вěсем ҫинче ларса пыракан салтакěсемпе тата офицерěсемпе пěрле путарнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра, Донăн хěвеланăҫ енче противник пехотин пěр батальонě пирěн чаҫсен пěр позицине атакăланă. Пирěн артиллери противникăн атакине сирсе пăрахнă. Тăшманăн пěр минометлă батарейне, артиллерин 4 батарейне, 10 пулеметне, боеприпассем турттарса пыракан 68 лава пěтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пěр рота ытла вěлерсе пěтернě.

* * *

Могилев облаҫěнче кěрешекен партизансен М. юлташ ертсе пыракан отрячěнчи партизансем икě уйăх хушшинче нимěҫсен фашистла захватчикěсене пысăк сухатусем тӳстернě. Партизансем тăшманăн продовольстви турттарса пыракан 2 поездне тата боеприпассем турттарса пыракан пěр поездне ӳпěнтерсе янă. Юлашки кунсенче тăшманăн пěр складне, 12 вагонне тата пěр поездне сирпěнтерсе янă. Ҫав кунсенче нимěҫсен 200 салтакне офицерне пěтернě.

* * *

Ворошиловградри Октябрьти революци ячěпе тăракан паровоссем тăвакан заводри рабочи Овчаренко П. Т., пирěн войскăсем тăракан вырăна каҫса килнě, нимěҫсен фашистла захватчикěсен ҫавтери тискер ěҫěсем ҫинчен пěлтерет: «Ворошиловграда кěрсенех нимěҫ салтакěсемпе офицерěсем массăллăн ҫаратма тытăнчěҫ. Гитлеровецсем урамра пыракан ҫынсене те чарса ҫаратнă. Фрунзе урамěнче нимěҫсем Анна Савкоран унăн чечче туфлине тата пальтине туртса илнě те ăна хăйне персе вěлернě. Гитлеровецсем тата ҫынсене тапса хулари магазинсене ҫаратнă, пуҫне ҫурса ас-ăнланмасса тытнă. Ҫав ҫапла Ворошиловград хулин ҫивěчлěх ...». Хулари маттур центральнăй паркěнче фашистсем ҫынсене персе вěлернě. Карл Либкнехт, Шевченко тата ытти урамсенче мирлě граждансене вěлернě, хулари пысăк ҫуртсене пěтерсе тăкнă.

Сентябрěн 3-мěшěнчи ирхи пěлтерӳ

Сентябрěн 3-мěшěнчи ҫěрле пирěн войскăсем Сталинград хули патěнче, Сталинградран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре, ҫавăн пекех тата Новороссийскран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре районěсенче хаяррăн ҫапăҫнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Сталинградран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре Н-ски соединени боецěсем противникăн атакине сирсе пăрахнă. Нимěҫсен 11 танкне, 600 таллěн ҫыннине, орудине тата 8 пулеметне пěтерсе тăкнă.

Клетская районěнче нимěҫ пехотин пěр полкě, 38 танк пулăшса пынипе, пирěн чаҫсен хӳтěленӳ позицине атакăланă. Нимěҫсен атакине сирсе янă. Вěсене пысăк сухатусем тӳстернě. 6 танк персе ҫěмěрнě, 200 салтакпа офицера ытла пěтерсе тăкнă. Тытăҫса пынă ҫапăҫура пирěн тылри тăшманăн пěр батальона пěтерсе тăкнă. Пирěн летчиксем противникăн пехотин 2 самолетне ӳкернě.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăҫнерехре пирěн войскăсем противникăн пирěн оборонине шала кěрсе ҫапăҫакан вăйěсене хирěҫ оборонăллă ҫапăҫусем тунă. Н-ски часть пěр участокра противник атакисене сирсе янă. Пирěн чаҫсем сапаланса пынă нимěҫсем хушшинче ҫапăҫса пынă. Гитлеровецсем 4 хут атакăланă. Пирěн артиллери минометсем тăшманăн 14 танкне пěтерсе тăкнă. Ҫав ҫапăҫусенче пирěн чаҫсем пěтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран ҫурҫěр-хěвеланăҫнерехре пирěн чаҫсем противникăн атакисене сирсе янă. Пирěн летчиксем ҫапăҫу хирěнче нимěҫсен 2 самолетне ӳкернě. Н-ски часть противникăн пěр ротине пěтерсе тăкнă. Ҫав участокра Бутенко, Отрадное, Зорин тата Бурсаков краснофлотецсем нимěҫсене тăшман мотоциклисчěсене хупăрласа илсе пěтерсе тăкнă.

Моздок районěнче пирěн чаҫсем тыв...

Ленинград фронтěнче пирěн разведка группи вражеский часть отрядне пырса тапăннă, тăшманăн пěр артиллери батарейне тата землянкине сирпěнтерсе янă. Разведчиксем хушăра 3 пленнăй илнě, 120 гитлеровеца вěлернě.

Пирěн летчиксем сывлăшри ҫапăҫусенче нимěҫсен 18 самолетне ӳкернě, 2 самолетне сиенленě. Ҫапăҫусенче пирěн летчиксем 3 самолетне ӳкернě.

Акламура Смоленск облаҫěнче партизансен Г. юлташ командир пулса тăракан отрячě нимěҫсен обозне тапăннă, ӳсě ҫурчěсене ҫырса илнě.

«П. юлташ — подразделени командирě 40 метр тăршшě сирпěнтерсе янă. Ҫыхăнăҫăн 80 метр тăршшě пěтерсе тăкнă, 30 нимěҫ салтакне вěлернě».

Партизансем пěр поезда сирпěнтерсе янă. Пěр паровоз тата 5 вагон ӳпěнтернě.

М. юлташ ертсе пыракан партизансем ... нимěҫсен 50 гитлеровеца вěлернě.

«Краснодартан кăнтăртарахра персе ӳкернě «Хейнкель-111» самолетăн экипажě Фридрих Фогель ҫапăҫса ... Германи информаци бюровěн ... ».

Отечественнăй аслă вăрҫă фрончěсенче

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăҫнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС спецкорě). Сталинградран кăнтăр-хěвеланăҫнерехри районра наступлени тăвакан противника хирěҫ хаяр ҫапăҫусем пыраҫҫě. Тăшман танксемпе вăйлă атакăсем тăвать, ҫапăҫăва вуншар бомбардировщиксемпе истребительсем кěртсе ярать.

Н-ски чаҫри гвардеецсем тăшмана хирěҫ 10 кун хушши ěнтě ҫирěппěн тăрса ҫапăҫаҫҫě. Нимěҫсен танкěсем пирěн боевой йěркесем урлă каҫса кěрсессěн те, боецсем хăйсен вырăнěсенчех юлаҫҫě. Вěсем тăшманăн пехотине татса уйăрса илеҫҫě те ăна пысăк сиен кӳреҫҫě.

Минометчиксен-гвардеецсен Юффа юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенийě темиҫе хутчен карăссăн персе гитлеровецсен 2 батальонне пěтерсе тăкнă. Пулеметчик Исаков сержант нимěҫсен виҫě атакине сирсе пăрахнă. Хăйěн пулеметне вырăнтан вырăна куҫарса лартса, Исаков 150 гитлеровеца вěлерсе пěтернě. Красноармеец Сажнев станковăй пулеметпа персе фашистсен 100 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă.

Кочетов лейтенант командир пулса ертсе пыракан ротăна нимěҫсем ҫавăрса илнě пулнă. Фронт енчен рота ҫине нимěҫсен пехотин пысăк ушкăнě тапăнса пынă. Ротăн тылне нимěҫсен темиҫе танкě кěрсе кайнă. Боецсем йěри-таврах оборона туса тăнă. Вěсем вилсен те хăйсен позицийěсенчен чакмалла мар тесе шут тунă.

Ҫапăҫу 13 сехет хушши пынă. Пулăшу пырса ҫитиччен рота ҫирěппěн тытăнса тăнă.

Каллех атака умěн нимěҫсем пирěн артиллеристсен позицийěсем ҫине нумай вăхăт хушши тата хаяррăн бомбăсем пăрахса тăраҫҫě. Танксем умěнчен вěсем истребительсем яраҫҫě. Истребительсем пулеметсенчен вăйлăн персе, орудисен расчечěсене салаласа яма хăтланаҫҫě. Анчах та нимěҫсен ҫак ěҫě ăнăҫлă пулаймасть. Оруди расчечěсен командирěсем Гетьманша Панасенко тăшман танкěсен вуншар атакине тӳссе ирттернě, танксенчен те, истребительсенчен те ěстан хӳтěленсе юлнă. Калининчех ҫапăҫу хирне ҫунакан машинăсем пăрахса хăварса, тăшман каялла чакнă.

Нимěҫсем инҫетри тылсенчен авиаципе танксен тата пехотăн ҫěнě резервěсене куҫарса килеҫҫě. Ҫапла венгерсемпе румынсен ҫěнě дивизийěсем пырса ҫитнине палăртнă.

Тыткăна лекнě нимěҫ салтакěсем пурте нимěҫсем юлашки ҫапăҫусенче ҫавтери пысăк ҫухатусем тӳсни ҫинчен калаҫҫě. Германин 4-мěш пехотнăй дивизийěн 5-мěш полкě питех те пысăк ҫухатусем тӳснě. Германин 20-мěш пехотнăй дивизийěнчи ротăсенче 60—60-шар ҫын кăна тăрса юлнă. Бельгирен кунта нумаях пулмасть куҫарса килнě 212-мěш пехотнăй полкăн 5-мěш ротинче 150 салтак пулнă, халě 35 салтак кăна тăрса юлнă. Танксен 29-мěш отрячě пěр уйăх хушшинче хăйěн машинисенчен 80 процентне ҫухатнă.

Вăйлă та юнлă ҫапăҫусем малалла пыраҫҫě. Пирěн чаҫсем гитлеровецсене халран яраҫҫě.

Н. МАРКОВСКИЙ.
Д. ЩУКИН.

Краснодартан кăнтăрарахра

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС спецкорě). Танксемпе мотопехотăна тата сăрт-ту чаҫěсене йышлăн пухса тăратса, противник кирек мěнле пулсан та малаллах талпăнса кěме хăтланать. Тăшман хаяррăн хěснине пирěн чаҫсем ҫирěппěн чарса тăраҫҫě тата хирěҫле пыра-пыра ҫапса ăна халран яраҫҫě.

Тинěс пехоти тăшмана хирěҫ харсăррăн ҫапăҫать. Моряксем Румынин кавалерин 5-мěш дивизине хирěҫ ҫапăҫу туса ирттернě. Вăйлă та юнлă ҫапăҫура румынсене сирсе пăрахнă. Румынсен дивизийěн составě ҫуррине яхăн пěтнě, вěсем техникăпа обозсем нумай ҫухатнă. Ҫапса аркатса дивизие нимěҫсен командованин тыла илсе тухма лекнě.

Пирěн йывăр минометсем пенипе нимěҫсем пысăк сиен кураҫҫě. Минометчик-гвардеецсем 10 кун хушшинче тăшманăн пехотине утлă ҫарне нумай пěтерсе тăкнă. Краснодартан кăнтăрарахри вăйлă ҫапăҫусем малалла пыраҫҫě.

Нимěҫсем Германи ҫарěн ҫухатăвěсем ҫинчен

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Пирěн алла нимěҫ салтакěсемпе офицерěсен нумай ҫырăвěсем, ҫавăн пекех тата Германи тылěнчен килекен ҫырусем лекнě. Ҫав ҫырусенче Германи ҫарěн йывăр ҫухатăвěсем тăтăшах ӳссе пыни ҫинчен тата унăн резервěсем пěтсе пыни ҫинчен каланă.

Теменле Вилли ятлă ҫын хăйěн арăмне Луизăна ҫапла ҫырать:

«Вырăссем танксемпе пысăк наступлени турěҫ. Ҫавна пула пирěн питех те нумай юн тăкăнчě. Пирěн рота кунран-кун пěчěкленсе пырать, халě ěнтě аран-аран икě взвод тăрса юлчě. Малалла та ҫаплах пулас пулсан, пире часах пурне те пěтерсе тăкаҫҫě. Ěнер эпě кунěпех хамăн вилнě юлташсене пухса ҫӳрерěм тата аманнисене сборнăй пункта иле-иле пытăм».

«Пирěн ротăра икě кун хушшинче 30 ҫын пěтрě. Ҫакă вăл вăйă мар, — тесе ҫырать Иозеф Гаер салтак (хирти почта, 27.940—С №) хăйěн тусě патне.— Вырăссем ҫавтери хаяррăн ҫапăҫаҫҫě. Российăра вăрҫă вěҫленесси пăхса та курăнмасть».

Нумай ҫырусенче: Германин хулисенче халě ěнтě штурмовиксемпе чăлах ҫынсене кăна курма пулать, тесе пěлтереҫҫě. «Эпě хамăр ҫěнтерěве пачах та ěненменни ҫинчен шухăшланисěр пуҫне урăх нимěн ҫинчен те шухăшлама пултараймастăп,—тесе ҫырать Эрнст Ратль патне унăн арăмě.—Вырăссем питех те вăйлă-мěн, пирěннисем нумайěшěсем ěнтě пěтрěҫ. Мěн чухлě ҫын тата пурнăҫпа сывпуллашěҫ!»

Пěтěм Союзри социализмлă ăмăрту

Пěр-пěринпе ăмăртса ěҫленě май

ВĂРНАР. (Телефонпа). Вăрманта ěҫлекенсем ҫěршыв умěнче хисеплě ěҫ тăваҫҫě: фронтпа халăх хуҫалăхне йывăҫ материалсем, вутă хатěрлесе параҫҫě. Пирěн леспромхозри работниксемпе работницăсем ҫавна лайăх ăнланса ěҫлеҫҫě, вěсем, пěр-пěринпе ăмăртса, вăрман хатěрлес плана срокчен тултарассишěн кěрешеҫҫě. Леспромхоз 3-мěш кварталти ěҫ планне касас енěпе 50 процент, турттарас енěпе 80 процент тултарчě. Вăрман турттарас енěпе эпир республикăра малта пыратпăр.

Пирěн вăрман пункчěсенчен Чарăклă пункчě ěҫе лайăхрах организациленě. Кунта кулленхи ěҫсен заданисене ытлашшипех тултараҫҫě, рабочисем Стаханов пек тухăҫлăн ěҫлеҫҫě. Ворошилов ячěпе тăракан колхоз членěсем Ф. Иванов, Д. Ильина, А. Медведева юлташсем пěрмаях 1,5—2-шер норма тултараҫҫě. Салмин, Филицкова юлташсем нормăпа 2 кубометр касас вырăнне куллен 3-шер кубометр касса хатěрлеҫҫě.

Лучковăй пăчкăпа ěҫлекенсен тухăҫлăхě уйрăмах пысăк. И. Максимов, И. Михайлов юлташсем нормăна 2 хут ирттерсе тултараҫҫě, Ондрецов юлташ 2,5 нормăна ҫитерет.

В. КУПЦОВ,
Леспромхоз директорěн заместителě.

Чугунҫул валли вутă

ЙĚПРЕҪ. Пирěн леспромхоз вăрман ěҫěсен виҫҫěмěш кварталти планне августăн 31-мěш тěлне хатěрлес енěпе—60 процент, турттарас енěпе—74 процент тултарчě. Районсенчен Йěпреҫ районě малта пырать, вăл задание хатěрлес енěпе 77 процент, турттарас енěпе 105 процент тултарнă.

Йěпреҫ районěнчен пынă колхозниксен ěҫ тухăҫлăхě те пысăк. Касакансен норма тăрăх уйăхра 52 кубометр хатěрлемелле. Партин 17-мěш съезчě ячěпе тăракан колхоз членěсем В. Чураков юлташ августра 150 кубометр, А. Жарков юлташ 117 кубометр каснă. Ҫамрăк рабочисем Е. Митрофановăпа И. Васильев комсомолец та нормăран ирттерсе ěҫлеҫҫě. Вěсем уйăхри ěҫ нормине 200 процент тултарнă.

Турттаракансен те ěҫ тухăҫлăхě ӳссех пырать. «Трактор» колхоз членě М. Яковлев юлташ августра 44 кубометр вырăнне 127 кубометр турттарнă. Шупашкар районěнчи «Хěрлě Ҫар» колхозран пынă возчик М. Яковлев юлташ нормăран 2 хут ытла тухăҫлăрах ěҫлет.

П. ФЕДОРОВ,
Леспромхоз директорě.

* * *

ЙĚПРЕҪ. Чугунҫул валли вутă хатěрлесси—питех те пысăк ěҫ. Ҫакна ăнланса ěҫлеҫҫě Буински вăрман пункчěн Кармал участокěнче вутă хатěрлекенсем. Вěсем йывăҫ касас тата вутă турттарас нормăсене ытлашшипех тултараҫҫě. «Хěрлě Октябрь» колхоз членě М. Казаков, «Малалла» колхоз членě А. Тихонов юлташсем виҫҫěмěш кварталта вутă турттарса кăларас задание тултарнă та ěнтě. Ф. Степанов, С. Ефимов колхозниксем те вутă турттарас заданисене кашни кун ирттерсе тултараҫҫě. 60 ҫултан иртнě Дмитриевпа Огурцов юлташсем те вěсенчен юлмаҫҫě. Кадровăй рабочисем С. Рипанов, Ш. Герлицкий, Б. Асеинов юлташсем кěске вăхăтрах икě ҫěрпӳрт, тепěр кухня туса лартрěҫ.

И. МИТЯСЬ.

Вěренӳ ҫулне ăнăҫлăн пуҫларěҫ

ЙĚПРЕҪ. (Телефонпа). Районри пур шкулсенче те занятисем организованно пуҫланчěҫ. Хумпуҫ Патăрьелěнчи тулли мар вăтам шкулта (директорě А. Синдячкин) занятисем малтанхи кунах йěркеллě иртрěҫ. Кăҫал унта пуҫламăш классенче 71 ача вěренмелле. Малтанхи кун 63 ача пынă, 8 ача тěрлě сăлтавпа пырайман. 1-мěшпе 2-мěш классенче вара занятисене пурте пынă. Ку шкул вěренӳ ҫулне лайăх хатěрленнě. Шкул ҫурчěсене юсанă, классене шуратнă, тěрлě лозунгсемпе, плакатсемпе илемлетнě, чечексем лартнă, хěлле валли вутă ҫителěклě хатěрленě.

Буинскри вăтам шкулта вěренӳ ҫулне лайăх хатěрленнě. Ҫак ěҫе калинни учитель хутшăннă. Вěсем хăйсемех шкул ҫуртне вак-тěвек ремонт тунă, паттăрсене юсанă, кăмакасене шуратнă. Вутă хума пěр сарай тунă, хěлле валли 80 кубометр вутă хатěрленě.

Ҫавăн пекех Ҫěнě Чурашри вăтам шкул, Упакассинчи, Кěлěмкассинчи, Шăртанри, Эйпеҫри тулли мар вăтам шкулсем те вěренӳ ҫулне лайăх пуҫланă. Ҫěнě вěренӳ ҫулне хатěрленсе районри шкулсем 5 пин кубометр ытла вутă хатěрленě, вăл шутран 2.500 кубометр турттарса кăларнă. Шкул ачисем 11 пин ытла учебник илнě.

Районри шкул ачисем, 932 ача, 30 отряда пěрлешсе хирте пучахсем пухнă. Пысăк Упакассинчи тулли мар вăтам шкулта вěренекен 65 ача 200 пăт ытла тырă тухмалăх пучах пухнă. Буинскри вăтам шкулăн пуҫламăш класěсенче вěренекен ачасем эмелсем тумалли курăксем 10 килограмм ытла пухнă тата 50 килограма яхăн ҫырласем пухнă.

Райсоюз учебниксем илсе килес тěлěшпе питех те ҫителěксěр ěҫленě. Пěр вырăсла букварь те илсе килмен. Карандашсем сахал илсе килнě, ручкăсем, чернил, шурă — пěрре те илсе килмен.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ачасем шкула тěрěс тěкел пынă

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Сентябрěн 1-мěшěнче Кăмпалти шкул ҫурчě патне ирхине 8 сехетре ачасем ушкăнěушкăнěпе пухăна пуҫларěҫ. 8 сехет те 30 минута тěлне малтанхи тăватă класра вěренекенсем пурте пухăнса ҫитрěҫ. Вěсем 9 сехет ҫитессине кěтеҫҫě.

Кăмпал шкулěн учительницисем Штыковăпа Томашова юлташсем сентябрěн 1-мěшчченех шкула вěренме ҫӳреме тивěҫлě ачасемпе уйрăммăн калаҫнă, вěсене шкула пыма хатěрленě. Уйрăмах пěррремěш класа вěренме пымаллисемпе аван калаҫнă. Ҫавна пула ачасем шкула пěр харăс пухăнчěҫ.

Шкул ҫурчě таса, урайě шурă. Пěр сăмахпа каласан, шкул вěренӳ ҫулне пур енчен те лайăх хатěрленсе ҫитни кěтсе илчě. Ачасен вěренес шухăшěкăмăлě ҫавтери пысăк. Пěррěмěш класра вěренме 8 ҫулхисем кăна мар, 7 ҫулхисем те пынă. Ним тума та сукҫул ҫитменнисене, вěсен кăмăлне пусарас, шкул заведующийě Штыкова юлташ каялла ячě.

9 сехетре урoксем пуҫланчěҫ.

Шкулти тăватă класра икě учительница вěрентет. Вěсем шкул ачисене шкулта мěнле йěрке пулмалли ҫинчен ăнлантарса пачěҫ.

Учительница Штыкова юлташ ялти колхозниксем хушшинче агитациллě ěҫе туса пырать, сентябрěн 1-мěшěнченех уборкăра ěҫленě, ҫапах та вăл урок планěсене тума ěлкěрнě. Паллах, икě класпа та пěр харăс урок ирттерме ҫăмăл мар. Апла пулсан та, учительницăсем лайăх хатěрленсе пынипе урoксем аван иртрěҫ.

Ҫапла I—IV-мěш классенче вěренӳ ҫулě пуҫланчě.

Ф. РОМАНОВ.

Шкул ачисен ěҫкунěсем

КАЛИНИНО. Шуркассинчи «Социализм» колхозри пионерсемпе шкул ачисем иртнě вěренӳ ҫулě вěҫленнě хыҫҫăнах колхоз производствинче активлăн ěҫлеме тытăнчěҫ.

Августăн 5-мěш тěлне пионер И. Хохлов 110 ěҫкунě, П. Васильева—91 ěҫкунě, П. Герасимова — 65 ěҫкунě тата М. Храмков—60 ěҫкунě тунă.

Вěсем колхоз производствинчи ěҫсене хăнăхса ҫитрěҫ.

Г. МАТВЕЕВ.

Ют ҫěршывсенче

САарБРЮККЕНА ПĚТĚМĚШПЕ ТЕНĚ ПЕКЕХ АРКАТНА

НЬЮ-ЙОРК, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫатăн корреспонденчě ҫакăн пек хыпар панă: куракан ҫынсем пěлтернě тăрăх, Саарбрюккена Англи авиацийě вěҫсе пыра-пыра тапăннипе пěтěмěшпех тенě пекех аркатса тăкнă. Ҫавăн пекех Парижри Рено завочěсем, Англи авиацийě темиҫе хутчен те вěҫсе пыра-пыра тапăнса аркатнăскерсем, хальхи вăхăтра хăйсем ěҫлеме пултарнинчен 25 процент кăна ěҫлеҫҫě.

АВСТРИЕЦСЕМ ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĚСЕНЕ ПУЛĂШАҪҪĚ

ЛОНДОН, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС). Мариборта тата Шпильфельдра 200 австриеца, вěсем Югославие каякан ҫар транспорчěсем ҫинче саботаж тунă тесе, арестленě. Нумаях пулмасть Австри железнодорожникěсем Югослави партизанěсем патне ҫěршер винтовкăсем тата боеприпассем тултарнă ещěксем нумай ăсатнă.

АМЕРИКĂРИ ПРОФСОЮЗСЕМ ПĚРЛЕШУЛЛĚ ШТАТСЕНЧЕН ФИНЛЯНДИЕ ХИРĚҪ ВĂРҪĂ ПУҪЛАССИ ҪИНЧЕН ПĚЛТЕРМЕ ЫЙТАҪҪĚ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС). Сан-Францискăри производствăллă профсоюзсен Конгресěн Центрě пěрсаслăн пулса резолюци йышăннă, ҫав резолюцире вăл США Конгресěнчен Маннергеймăн Финляндине хирěҫ вăрҫă пуҫласси ҫинчен пěлтерме ыйтать. Финляндия Пěрлешӳллě Штатсене хирěҫ вăрҫать ěнтě, тесе кăтартса панă резолюцире.

УИЛКИ КАИРА ПЫНИ

ЛОНДОН, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, паян Каира Рузвельтăн личнăй представителě Уэнделл Уилки пынă. Аэродром ҫинче ăна Америка посолě Александер Керк, Англин Ҫывăхри-Хěвелтухăҫěнчи государственнăй министрě Кэзи, генерал-майор Максуэлл, авиацин вице-маршалě Макклэфри тата ыттисем те кěтсе илнě.

ИТАЛИРЕ ПРОДОВОЛЬСТВИ ПИРКИ ПУЛНĂ ЙĚРКЕСĚРЛĚХСЕМ

ЛОНДОН, сентябрěн 2-мěш. (ТАСС). Ирěклě Италин оргăнě — «Нотициарие Италиано» хаҫат ҫапла пěлтерет: нумаях пулмасть Италири тěрлě хуласенче хěрарăмсем продовольстви склачěсем ҫине тапăннă. Полици Парма, Болонья, Турин, Генуя тата Милан хулисенче ҫынсене хупăрла-хупăрла илсе ухтарнă.

ШВЕЦИ ХАҪАЧĚ ШВЕЦИЯ НЕЙТРАЛИТЕТ ПОЛИТИКИНЧЕН ПĂРĂННИ ҪИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, августăн 31-мěш (ТАСС). «Гетеборгс Хандельстиднинг» хаҫат августăн 29-мěшěнче пичетленě статьяра ҫапла ҫырать: «Швеци правительстви хăй те нейтральнăй теме пултарман политика тытса пырать. Нейтралитетран пăрăннисем—пысăк та паха ыйтусемпе пăрăннисем пурте Германишěн усăллă пулнă. Германи салтакěсем Швеци тăрăх халě те-ха урлă та пирлě куҫса ҫӳреҫҫě. Германи войскисем валли ҫар материалěсене Швецин чугунҫулěсем тăрăх халě те турттараҫҫě-ха, халě вěсене ěлěкхинчен ытларах та турттараҫҫě. Халě секретра тытса тăракан япаласенчен нумайěшě вăрҫă хыҫҫăн паллă пулса тăрěҫ. Хальхи вăхăтра Швецире пурăнма вырăн шыракансем ҫине Швеци влаҫěсем мěнле пăхни те пěтěмпех паллă пулса тăрě. Ун чухне вара пире каҫарма пулăшакан сăлтавсене тупма йывăр пулě. Пирěн правительство ун чухне пěр ҫакăн пек ҫеҫ ăнлантарса пама пултарě: Германирен хăрана, тейě. Анчах та хăшпěр ҫěрте ҫавăн пек хăрани вăл кăмăлланипе хутшăнса кайнă, мěншěн тесессěн правительствăра демократие хирěҫ тăракан реакциллě вăйлă ҫынсем пур. Премьер вěсене е тытса чараймасть-и, е вăл хальхи событисене ҫителěклех ăнланса илеймест-и. Кирек мěн пулсан та, вăл тěлěнтермелле алла усса тăни, ҫавăн пекех тата хирěҫӳллě те уҫăмлă мар кала-кала пани—ҫаксем унăн ăнăҫуллă мар. Вăрҫă пěтсен пурне те манěҫ, пуриншěн те каҫарěҫ, тесе шухăшлани ачалла хăтланни пулать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВНИМАНИЮ РАДИОСЛУШАТЕЛЕЙ!
Расписание ежедневных передач Радиокомитета при СНК Чувашской АССР

(Ст. РВ-74, волна 943 метра, время местное)

7.35—7.44 Передовая статья газеты «Чăваш Коммуни» или политбеседа на чувашском языке.
7.45—7.59 «Последние известия» на чувашском языке (вечернее сообщение Совинформбюро и информации ТАСС) — транслируется также и по сельским телефонным сетям.
8.15—8.24 Передовая статья газеты «Красная Чувашия» или политбеседа на русском языке.
8.35—8.44 Вечернее сообщение Совинформбюро (на чувашском языке).
18.15—18.29 «Последние известия» на чувашском языке (утреннее сообщение Совинформбюро и информации ТАСС).
18.30—18.39 Политбеседа или стихи и очерки об отечественной войне.
18.50—19.04 «Последние известия» на русском и чувашском языках — транслируется также и по сельским телефонным сетям.
19.05—19.19 Сельскохозяйственная передача на русском и чувашском языках — транслируется также и по сельским телефонным сетям.

РАДИОКОМИТЕТ при СНК ЧАССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторěн — 0—67, редакци секретарěн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăҫ пайěн — 3—99, ялхуҫалăх пайěн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 921 Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.